## Тăван поэзийĕн мухтавĕ

Петĕр Хусанкай. Çак çыннăн, юратнă поэтăмăрăн ырă ятне эпĕ мĕн ачаранпах хамăн чĕрере тытатăп.

Эпĕ тӳрех çапла калама пултаратăп: мана Митта Ваçлейĕпе Петĕр Хусанкай литература çулĕ çине тăратрĕç. Çавăнпа эпĕ вĕсен умĕнче пуçăма таятăп.

Эпĕ Петĕр Хусанкай çырнă сăвă-юрăсене ялти шкулта вĕреннĕ чухнех юратса вулаттăм, халăх умĕнче пăхмасăр тухса калаттăм. Мĕн ачаранах поэта хăйне курас шухăшпа пурăнаттăм. Ĕмĕтĕм пурнăçланчĕ: Петĕр Хусанкая пĕрремĕш хут 1937 çулта Шупашкарта тĕл пултăм. Çине Петр Петрович Хусанкай хура кĕрен çипрен çыхса тунă ăшă кĕпе, кофта тăхăннă. Аллинче - пĕчĕк шурă тутăр.

- Куçăмсем пăсăлчĕç. Çутта пăхма йывăр, - тет поэт. Чăнах та, Петр Петровичăн куçĕсем йăлтах хĕрелсе кайнă. Апла пулин те, хăй пуçне усмасть.

Кун хыççăн кун, çул хыççăн çул иртрĕ. Халĕ шухăшлатăп та тĕлĕнетĕп: эпĕ Хусанкая вăтăр çул ытла пĕлетĕп.

...1940 çул. Эпĕ Совет Çарĕн салтакĕ. Çапла кĕтмен çĕртен, пĕр йывăр походра пулнă хыççăн, хытă чирлесе ӳкрĕм. Нарва хулинче госпитальте выртатăп. Çак йывăр кунсенче эпĕ Петр Петровичран çыру илтĕм. Вăл мана хăвăртрах чĕрĕлме ырлăх-сывлăх сунать. Çак çыру ман чун-чĕрене пысăк вăй-хăват пачĕ. Петĕр Хусанкай, юлташĕсен ĕçĕ ăнса пырсан, çав тери савăнатчĕ.

Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн, Шупашкара таврăнсан, Петр Петрович ман пата хваттере пычĕ. Эпĕ ăна хамăн çĕнĕ сăвăсемпе паллаштартăм. Ун чухне поэт мана çав тери усăллă канашсем пачĕ.

- Эс çырнă çак икĕ сăвва вырăсла куçарса пăхам-ха, мĕн пулĕ, - терĕ мана Петр Петрович. Нумай та вăхăт иртмерĕ, вăл манăн «Çутă ĕмĕт»,

«Çутă хĕç» сăвăсене вырăсла куçарчĕ. Эпĕ тĕлĕнтĕм: поэт чăвашларан куçарнă сăвăсен виçине, шухăшне лайăх упраса хăварнă. Ку мана питех те савăнтарчĕ.

Пĕр çулхине, кĕркунне, эпĕ Хусанкая хам пата хăнана чĕнтĕм. Эпир унпа чылайччен калаçса лартăмăр.

- Петр Петрович, эсĕ ман патăмра час-часах пулаймастăн. Магазина кайса эрех илсе килем-ха. Ĕçер-ха пĕрре, - терĕм. Поэт хуллен пуçне сула-сула илчĕ те:

- Кирлĕ мар. Эпĕ паян театра каятăп. Искусство керменне эрех ĕçсе кайма юрамасть, - терĕ вăл. Эпĕ ун сăмахне халĕ те яланах аса илетĕп.

1950 çулта, Чăваш литературипе искусствин эрнине Мускавра ирттерме хатĕрленнĕ кунсенче, эпĕ Хусанкая республикăри паллă çын, Вăрнар районĕнчи Ленин ячĕпе хисепленекен колхоз председателĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ Сергей Коротков çинчен çырнă хамăн сăвва кăтартрăм.

- Пурте вырăнлă, пурте йĕркеллĕ. Ку сăвăран юрă тума пулать, - терĕ те Петр Петрович телефонпа парти обкомĕн секретарĕ Семен Матвеевич Ислюков патне шăнкăравларĕ.

- Василий Давыдов поэта Мускава, литературăпа искусство эрнине, илсе кайсан мĕн пулĕ-ши? Эпĕ халĕ унăн çĕнĕ сăввине вуларăм. Сăвви кăмăла кайрĕ, - терĕ вăл.

Семен Матвеевич та Хусанкай сĕннипе килĕшрĕ пулас: мана та Мускава илсе кайрĕç. Мускавра Чăваш литературипе искусствин эрни çав тери йĕркеллĕ иртрĕ. Концертсене, литература каçĕсене пынă çынсем уйрăмах Петĕр Хусанкай сăвă вуланине мĕнле лайăх йышăнни халĕ те асран каймасть.

Çĕр каçма эпĕ хамăн Мускав айккинче пурăнакан Макçăм пичче патне кайрăм. Вăл та, пирĕн концертра пулнăскер, çĕрĕпе тенĕ пек Петр Петрович çинчен сăмахларĕ.

- Пултаруллă поэт. Вăл пурришĕн пирĕн савăнмалла, мухтанмалла, - терĕ мана пичче.

Петĕр Хусанкай маншăн, сăвăсем çыракан çыншăн, яланах вилĕмсĕр улăп-поэт пек куç умĕнче тăрать.

1956 çулхи ноябрĕн 8-мĕшĕнче пире хамăрăн çывăх тусăмăр, чăвашсен паллă поэчĕ Митта Ваçлейĕ, хăнана чĕнчĕ. Кĕрекере, хисеплĕ хăнасем хушшинче, Петр Петровичпа унăн мăшăрĕ Вера Кузьминична Кузьмина та пулчĕç. Петр Петрович хăнара хăйне питех те савăнăçлă тытрĕ. Ун чухне вăл Вера Кузьминичнăпа чăвашсен авалхи пĕр юррине питех савăнăçлăн юрларĕ:

Ай, пуçана, пуç ыратать, -
Симĕс кайăк пуçран сăхрĕ.
Чарсам, чарсам эс кайăкна.
Ати калать: ай, кайăр, тет,
Нӳхреп калать: ан кайăр, тет,
Сире валлн татах пур, тет.
Апи калать: ай, кайăр, тет,
Кăмаки калать: ан кайăр, тет,
Сире валли татах пур, тет.

Ку юрра Митта Ваçлейĕ мĕн çĕре кĕричченех аса илсе пурăнчĕ, ăна вăл «Хусанкай юрри» тетчĕ.

1953 çулта, кĕркуннеччĕ пулас, эпир писательсен Союзĕнче Петĕр Хусанкайăн «Горкăри çурт» поэмине сӳтсе яврăмăр, поэт хамăр çулпуçăмăр Ленин çинчен лайăх, илемлĕ произведени çырнишĕн савăнтăмăр. Петр Петрович эпир сăмах тухса каланине итлесе ларнă хушăрах хăй умне хунă хут листи çине картина ӳкерме пуçларĕ. Поэзи секцийĕ вĕçленсен, вăл мана çав хут листине тыттарчĕ те:

- Ку сана - парне. Хусанкай сăвăç çеç мар, художник та, - терĕ кулса. Эпĕ поэтăн çав ӳкерчĕкне халĕ те упраса пурăнатăп.

1961 çулта, пĕр çуллахи кун, эпĕ Петĕр Хусанкай патĕнче пултăм. Нумай калаçса лартăмăр. Ун чухне Петр Петрович мана хăй ӳкернĕ фотокарточкăсене кăтартрĕ, хăйĕн тата амăшĕн сăнӳкерчĕкĕсене парнелерĕ. Хăйĕн сăнӳкерчĕкĕ çине: «В. И. Давыдов-Анатрине. Асăм палли. Петĕр Сумбай», - тесе çырса хучĕ, амăшĕн сăнӳкерчĕкĕ çине вара: «В. И. Давыдов-Анатрине. Анне ку, çулла 60 çулта ӳкернĕ. Сумбай П. ӳкернĕ. П. Хусанкай», - тесе çырса пачĕ.

1965 çулхи апрель уйăхĕнче, шыв-шур вăхăтĕнче, Петĕр Хусанкай, Алексей Талвир, Юхма Мишши тата эпĕ Патăръелне кайрăмăр. Ял ĕçченĕсемпе, шкулсенче вĕренекен ачасемпе тĕл пултăмăр.

Ун чухне эпир Первомайскине, Аслă Арапуçне, ман тăван яла çитсе куртăмăр, «Рассвет» колхоз ĕçченĕсемпе, вăтам шкулта вĕренекенсемпе тĕлпулу ирттертĕмĕр. Хусанкай арапуçсем хамăр тăван литературăна, чĕлхемĕре чун-чĕререн юратнишĕн, хисепленишĕн çав тери савăнчĕ. Вăл шкулти музей кĕнеки çине çапла çырса хăварчĕ: «Арапуç ачисем те ар пулнă, хĕрĕсем те кĕрнеклĕ, хитре!.. Çак Юхма тăрăхĕнче, Митта çĕршывĕнче, чĕлхе ăстисем, сăвăç-калавçăсем çине-çинех тухса тăрассăн туйăнать. Çапла пултăрччĕ!»

Апрелĕн 24-мĕшĕнче Патăръелĕнчи Культура çуртĕнче районти çамрăксене эпир хамăр произведенисемпе паллаштартăмăр, сăвăсем вуласа патăмăр. Тĕлпулу вĕçленес умĕн комсомол райкомĕн секретарĕ Владимир Чекушкин пире пурне те комсомол ретне илни çинчен пĕлтерчĕ, кăкăрсем çине ВЛКСМ значокне çакса ячĕ. Петр Петрович çамрăксем çине ăшшăн пăхса илчĕ те:

- Эсир мана каллех яш-кĕрĕмсем шутне кĕртрĕр пулать, - терĕ.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче пирĕн ушкăн икĕ пая уйрăлчĕ. Эпир, Петĕр Хусанкайпа иксĕмĕр, Патăръелĕнчи интернат шкулта пултăмăр. Ачасем

хӑйсем патне поэтсем пынишӗн питех те савӑнчӗҫ. Эпир вӗсене хамӑр пурнӑҫпа паллаштартӑмӑр, сӑвӑсем вуласа патӑмӑр. Тӗлпулу ҫав тери лайӑх, илемлӗ иртрӗ темелле. Ачасем пире ыйтусем нумай пачӗҫ. Юлашкинчен сцена ҫине ҫамрӑк хӗрача хӑпарса тӑчӗ те пире хисеплӗ пионера илни ҫинчен пӗлтерчӗ, Петр Петрович мӑйне хӗрлӗ галстук ҫыхса ячӗ. Поэт вара ачасен еннелле ҫаврӑнчӗ те: «Эх, поэзи вӑйӗ! Эсӗ пур ҫӗре те ҫитетӗн, ҫынсен чун-чӗрине ҫӗклетӗн, уҫса яратӑн!» - терӗ.

Петер Хусанкай Патӑръелӗнче пулнӑ хыҫҫӑн ятарласа «Юхма тӑрӑхӗнче» ятлӑ сӑвӑсен ярӑмне ҫырчӗ. Унти «Ытарайми тӑван чӗлхе» ятлӑ сӑвӑра ҫакӑн пек хавхаланса ҫырнӑ йӗркесем пур:

Ытарайми тӑван чӗлхе
Кунта янрать тата илемлӗн!
ӗмӗртенхи витӗмлӗхе,
Тӳсӗмлӗхе туйса илетӗн.

Художнпк Кокеле иккен
(Турхансене) сума сӑваҫҫӗ.
Ҫыракана та - Талвиртен
Юхма Мишшн таран саваҫҫӗ.
Анатрие асра тытса,
Айхи ҫинчен ыйтса пӗлеҫҫӗ.
«Ят йышлӑ-ҫке», - тесен, татса:
«Митта ҫӗршывӗ ку!» - тееҫҫӗ.

...1958 ҫулта поездпа Шупашкартан Мускава Раҫҫейри писательсен пӗрремӗш съездне каятпӑр. Петӗр Хусанкай пире ҫул тӑрӑх хӑй курни-илтни ҫинчен кала-кала парать. Хӑй пуҫне пӗр пӗчӗк шур тутӑр ҫыхнӑ. Эпӗ унтан: «Петр Петрович, эсӗ мӗншӗн тутӑр ҫыхнӑ?» - тесе ыйтрӑм.

Хусанкай ҫавӑнтах: «Ҫӳҫ ҫине тусан ларасран ҫыхатӑп», - терӗ. Калаҫу ерипен малалла тӑсӑлчӗ.

- Эсӗ, Ваҫлей, «Чеменпе Мерчен» поэма ҫырса ырӑ ӗҫ турӑн. Халӑх сӑвви-юррисемпе питех те нумай усӑ курнӑ вара, - тесе хучӗ. Эпӗ нимӗн те чӗнмерӗм.

Писательсен съездӗнче Петр Петровича президиума суйларӗҫ. Пӗр ларура вӑл съезда председатель. пулса ертсе пычӗ. Хӗрӳллӗ сӑмах тухса каларӗ. Хам паллакан вырӑс, тутар тата ытти халӑхсен писателӗсем ун сӑмахне мухтаса каланине эпӗ темиҫе хутчен те илтрӗм.

Союзсен ҫурчӗн колоннӑллӑ залӗсенче, фойере ҫӗр-шыври паллӑ писательсем ҫинчен юлташла тӑрӑхласа тунӑ ӳкерчӗксем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Унта чи малта, руль умӗнче, матрос тумӗ тӑхӑннӑ Леонид Соболев писатель. Ҫакӑнтах пирӗн Петӗр Хусанкай. Вӑл хӑйӗн ӗҫри тус-тантӑшӗсемпе пӗрле хӑюллӑн малалла утать.

1958 ҫулхи мартӑн 5-мӗшӗнче чӑвашсен паллӑ поэчӗ Митта Ваҫлейӗ ҫуралнӑранпа 50 ҫул тултарчӗ. Каҫхине, филармони ҫурчӗ. Кунта халӑх туллиех. Поэт тӑванӗсем, юлташӗсем, литературӑпа искусство деятелӗсем, рабочисемпе студентсем пухӑннӑ. Эпир пурте Миттана чыслатпӑр. Вӑл тӑван халӑхӑмӑрӑн юратнӑ поэчӗ иккенне туйса тӑратпӑр. Урӑхла пулма та пултараймасть. Мӗншӗн тесен поэт хӑй те халӑха чун-чӗререн юрататчӗ, уншӑн пӗтӗм вӑй-халне парса ӗҫлетчӗ. Чӑваш писателӗсен Союзӗн правленнйӗн председателӗ Алексей Талвир мана та президиума ларма ыйтрӗ. Ман умра Петр Петровнч Хусанкай ларать, ҫумра вара Митта Ваҫлейӗн мӑшӑрӗ - Нонна Кирилловна Митта. Вӑл хӑй питӗ пӑлханать. Эпӗ ӑна йӑпатма пӑхатӑп. Митта Ваҫлейӗн пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗ ҫинчен Хусанкай доклад туса пачӗ. Ун доклачӗ хӑйӗн хӑвачӗпе пире пурне те тӗлӗнтерчӗ. «Митта - чӑн-чӑн халӑх поэчӗ», - терӗ Хусанкай.

1958 çулхи май уйăхĕнче эпĕ Кăкшăмри писательсен çуртне кайрăм. Писательсен çуртне Петĕр Хусанкай та пычĕ. Малтанхи кунах пире мунча хутса пачĕç. Эпĕ вăрмантан çĕнĕ милĕк хуçса килтĕм. Петр Петровичпа пĕрле мунча кĕтĕм. Мунчи çав тери вĕри. Эпĕ хам та сисмерĕм, Хусанкайăн пĕр сăввине каласа çапăнма пуçларăм:

Тупа-тупа тупата,
Ик урара çăпата,
Çăпата мар - атă,
Манăн старик ватă.
Кунĕн-çĕрĕн пăк та пак
Тĕтĕрет кăна тапак...

Петр Петрович эпĕ сăвă вуланине илтсен чăтаймарĕ, ахăлтатсах кулса ячĕ. Мунчаран тухсан, сивĕнсен, Петр Петрович ман пӳлĕме пырса ларчĕ. Çĕрĕпе калаçрăмăр. Поэт мана хăйĕн пичетре пулман произведенийĕсене, хăшпĕр çынсене тĕртсе илекен сăввисене вуласа пачĕ. Унăн витĕмлĕ, йĕплĕ сăввисем ман асăмра ĕмĕрлĕхех юлчĕç. Çак сăвăсене эпĕ çавăнтах хут çине çырса илтĕм, вĕсене вара халĕ те упраса усратăп. Ун чухне мана вăл хăйĕн икĕ çĕнĕ кĕнекине парнелерĕ. «Поэмăсем» кĕнеки çине çакăн пек йĕркесем çырса хунă:

«Поэма та, темĕн те пулĕ.
Пăртак пурăнсан енчĕк тулĕ.
Поэчĕ кайсан, ячă юлĕ,
Çапах та ку пулнă - ун мулĕ».

«Лирика» ятлă тепĕр кĕнеке хуплашки çине çак йĕркесене çырчĕ:

«Тӗнче ҫавӑрнать пӗрех май,
Ҫакна ӑнланать Хусанкай».

1958 ҫулхи майӑн 31-мӗшӗнче, каҫхине, эпӗ тӗлӗкре Петр Петрович амӑшне Варвара Борисовнӑна курнӑ. Хурлӑхлӑ тӗлӗкчӗ вӑл.

Ҫак тӗлӗке эпӗ ирхине Петр Петровича каласа патӑм. Вӑл ман ҫине кулараххӑн пӑхса илчӗ те:

- Чӑнах та тӗлӗнмелле тӗлӗк, - тесе хучӗ.

Ҫак тӗлӗке эпир Петр Петровичпа амӑшне пытарнӑ кун тепӗр хут аса илтӗмӗр. Эпӗ ун ҫинчен хам блокнот ҫине ҫапла ҫырса хунӑ: «Паян Петӗр Хусанкай амӑшне Варвара Борисовнӑна пытартӑмӑр. Ҫанталӑк, чылай вӑхӑт хушши уяр, шӑрӑх тӑнӑ хыҫҫӑн, пӑсӑлса кайрӗ. Ҫумӑр чашлаттарсах ҫума пуҫларӗ. Варвара Борисовнӑна пытарнӑ чух масар ҫинче Иван Кузнецовпа Петӗр Хусанкай сӑмах каларӗҫ.

– Ман анне 83 ҫул пурӑнчӗ. Вӑл хӑй ӗмӗрӗнче йывӑрлӑх нумай курчӗ, ҫапах та, мӗн куҫне хупичченех, ҫын тивӗҫне ҫӳлте тытрӗ. Вӑл яланах таса чунлӑ хӗрарӑм пулнӑ. Ман пурнӑҫӑмра, чунӑмра мӗн лайӑххи, ырри пур, уншӑн эпӗ аннене тав тума тивӗҫлӗ. Анне мана поэзи ҫулӗ ҫине тӑма пулӑшрӗ, ҫӗрӗ-ҫӗрӗпе хамӑр тӑван халӑхӑмӑр сӑвви-юррисене каласа паратчӗ, - терӗ Петр Петрович.

1959 ҫулхи август уйӑхӗнче Хусанкай Хура тинӗс хӗррине, писательсен «Коктебель» ятлӑ ҫуртне канма кайрӗ. Унта тухса кайнӑ чух вӑл манран Шупашкар хыпарӗсене пӗлтерме, хӑйӗн пичетрен тухакан ҫӗнӗ кӗнекине ярса пама ыйтрӗ. Эпӗ хавасланса килӗшрӗм, Ҫыру та ҫыртӑм, кӗнеке те ярса патӑм. Нумай та вӑхӑт иртмерӗ, эпӗ унтан явап илтӗм:

«Васлей шӑллӑм! Ҫырупа кӗнеке ҫитрӗ. Паянах ҫырас терӗм-ха.

Чи малтан - тав тӑватӑп. Унтан тепӗр чӑрмав. Ҫакна илсенех, тархасшӑн, пӗтӗм авторскине Мускава яртарччӗ. Москва, 9. До

востребования. Петру Петровичу Хузангаю. Кĕрсе илĕп. Тăлмачсемпе редакторне парас шутăм пур. Тата хăшпĕр çĕре ярса парăп.

Хам час таврăнаймăп. Унччен сывлăха юсама тытăнса пăхасшăн. Чармасан, тен, кăшт çыраймăп-и, тетĕп. Кунта пит йывăр пулчĕ: хĕвелтен пытанкаласа кăна пурăнтăм. Августăн 27-мĕшĕнче тухатпăр. Килйышăм - киле, хам Мускава юлса, лекĕрсемпе канашласа пăхасшăн. Мĕн тейĕç. Шупашкар хыпарĕсене кĕскен çав адреспах çырса ярсам.

Салам. Тав. П. Хусанкай».

Эпĕ Петр Петрович килйышне Çĕнĕ 1961 çул ячĕпе салам çыртăм. Çăкăр тăвар хире-хирĕç тенĕ пек, вĕсенчен те часах çыру илтĕм.

«Васлей, Анатри ĕçчен! - тесе çырать вăл. - Тин антăм машина çинчен. Çыру вырта парать. Тавтапуç ырă сăмахушăн, ырă кăмăлшăн.

Çĕнĕ çул ячĕпе мĕн пултарнине йăлтах сунатпăр: телей, савăнăç, сывлăх, ăнăçлă пултарулăх, ÿсĕм-тÿсĕм. Сунма ансат, тăвасси - хамăрта. Ан ятла. Верук, Атнер. П. Хусанкай».

1962 çулхи февралĕн 28-мĕшĕнче эпĕ Петĕр Хусанкайăн çĕнĕ «Тилли юрри» кĕнекине вуласа тухрăм. Юлашки çулсенче эпĕ хамăр поэзире çакăн пек чуна тыткăнлакан кĕнеке тĕл пулсах кайман. Чăннипех те савăнтăм: кĕнекери кашни йĕрке хăйне майлă янăрать, халăх сăвви-юррисене çывăх тăрать. Вĕсене поэт илемлĕн вырнаçтарса тухнă, хăват, çунат панă. «Мĕнле вăйлă, янравлă, сумлă та çепĕç пирĕн тăван чĕлхемĕр», - теессĕм килет.

Сакăр вунă сакăр, ай, сăввăм пур,
Тăхăр вунă тăхăр такмакăм пур, -
Умăрсене сарса хурам-шим,
Суйла кăна, суйла юрлам-шим?

Кĕрекĕрсем сарă, пылăр хăла,

Юрлайăп-ши чипер ăсăмпала?
Пысăк чысăрсене пăсайсан,
Мĕн калăр-ши эсир эп кайсан? -

тет поэт хăйĕн пĕр юрринче. Кĕнекери сăвăсем пурте çакăн пек техĕмлĕ. Эпĕ, «Тилли юррисене» вуласа тухнă хыççăн, Петĕр Хусанкайăн поэзи çăлкуçĕ епле вăйланса пынине тепĕр хут туйса илтĕм.

Çак кĕнеке çинчен эпĕ «Коммунизм ялавĕ» хаçатра статья пичетлесе кăлартăм. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, эпир, поэтсем, пĕрле пухăнса, «Тилли юррисем» кĕнекене пăхса тухрăмăр. Унта эпĕ çак кĕнеке çинчен пĕчĕк доклад туса патăм. Кĕнеке пирки Александр Алка, Александр Артемьев, Алексей Воробьев, Георгий Орлов хăйсен шухăш-кăмăлĕсене каларĕç. Эпир пурте «Тилли юррисем» кĕнеке - халăх поэчĕн хаклă парни, терĕмĕр. Хусанкай хăй кĕнекине сӳтсе явма килнĕ юлташсене чун-чĕререн тав турĕ. Поэзи секцийĕн ларăвĕ вĕçленсен, Петр Петрович мана хăйĕн «Тилли юррисем» кĕнекине парнелерĕ, кĕнеке хуплашки çине сăвăласа икĕ йĕрке çырса хучĕ:

«Ваçлей Иванăч Анатри!
Ăнлантăмăр пĕрне-пĕри.
*П. Хусанкай».*

1962 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче Мускавран СССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратнă Алексей Сурков поэт суйлавçăсемпе тĕл пулма Шупашкара килчĕ. Каçхине И. Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен педагогика институтне çынсем йышлăн пухăнчĕç, Кунта Алексей Сурков хулари суйлавçăсемпе тĕл пулчĕ. М. Михайлов доверненнăй, М. Сироткин профессор, Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай, филологи наукисен кандидачĕ Б. Бройтман тата ытти юлташсем Алексей Сурков çинчен ăшă сăмахсем туха-туха каларĕç.

- Сурков - пултаруллă поэт, государство деятелĕ, мир салтакĕ, - терĕç вĕсем. Петр Петрович ун чухне Сурковăн «Пĕчĕк çеç кăмака, вут çунать» ятлă хăй куçарнă сăввине пысăк хавхаланупа чăвашла вуласа пачĕ.

Алексей Сурков Петĕр Хусанкай аллине пĕтем чун-чĕререн хисеплесе чăмăртарĕ.

1962 çулхи çурхи кун. Эпир тăваттăн: Петĕр Хусанкай, Аркадий Лукин, Юрий Петров поэтсем Чурачăкри, Канашри шкулсенче вĕренекен ачасемпе тĕл пулма каятпăр. Машина моторĕ çав тери кĕрлет. Пĕр-пĕринпе калаçнине илтме йывăр. Петр Петрович ăна-кăна пăхмасть, пире хăйĕн хĕвеланăç çĕршывĕсенчи тусĕсем çинчен кала-кала парать. Сăмах Пăлхар поэчĕ Ламар çинчен пуçланчĕ.

- Ламар сăвăç çеç мар, ывăнма пĕлмен турист. Вăл хăйĕн машинипе чылай çĕршывсенче пулнă, Лондона çитсе курнă, юлашки вăхăтра çеç вунă пин километра яхăн поход тунă. Поэт чăваш çĕршывне те килсе каясшăн-ха, - тет пире Петр Петрович.

Чурачăкри шкул-интернат. Кунта ачасемпе тĕлпулу ирттертĕмĕр. Малтан Петĕр Хусанкай кĕскен чăваш литератури çинчен каларĕ. Эпир ачасене хамăр сăвăсене вуласа патăмăр. Пирĕн ума кунта вĕренекен шкул ачи Роман Николаев тухса тăчĕ. Вăл пысăк хавхаланупа хăй çырнă «Кăвакарчăн» сăвва вуласа пачĕ. Ун сăввинче пусăмсене пăснă вырăнсем пур. Петр Петрович ăна хăйĕн тăван пиччĕшĕ пек хуллен кăна: «Тăванăм, пусăмсене çирĕп тытса пымалла. ĕлĕк эпир çичĕ пушăтран çăпата тăваттăмăр. Çичĕ пушăт вырăнне сакăр пушăт хурса ярсан, çăпата чалăш пулатчĕ. Çавăн пекех сăвăра та ытлашши пусăм-ритм тума юрамасть», - терĕ.

Тепĕр кунне эпир Елчĕке çитрĕмĕр. Çурхи каç. Районти Культура çуртĕнче ларма пĕр пушă вырăн та çук. Кунта колхозниксем, районти учрежденисенче ĕçлекенсем, вĕренекен ачасем йышлăн пухăннă. Поэзи

каçӗ пулмалла. Çак каçа ирттерме елчӗксем лайӑх хатӗрленнӗ. Кун çинчен урамсене пӗлтерӳсем çапнӑ, районти «Колхоз хаçачӗ» ятарласа литература страници пичетлесе кӑларнӑ. Культура çуртӗнче «Пирӗн юратнӑ писательсем» фотовыставка йӗркеленӗ. Унта Константин Иванов, Çеçпӗл Мишши, Семен Элкер, Петӗр Хусанкай, Яков Ухсай, Александр Алка, Василий Алагер тата ытти писательсен сӑнӳкерчӗкӗсем пур. Куç умне чӑваш кӗнеки витрини тухса тӑрать. Кунтах кӗнеке сутакан килнӗ. Ӑна çынсем хупӑрласа илнӗ. Ял ӗçченӗсем пирӗн писательсен произведенийӗсене туянаççӗ. Эпир кӗнекесем çине ӑшӑ сӑмахсем çырса паратпӑр. Сцена çине пурне те курӑнмалла пысӑк саспӑллисемпе Çеçпӗл Мишшин сӑмахӗсене çырса çапнӑ:

Хастарлӑ, хыт утӑмлӑ пулӑр,
Çершывӑн хастар ачисем.
Вут кайӑклӑн вӗçӗр, ан юлӑр,
Ан юлӑр кунçул уттинчен.

Кунтах Кокстантин Иванов каланӑ çулӑмлӑ сӑмахсем пур:

Çакӑ çутӑ тӗнчере
Вӑйли çук та этемрен.
Шывсем çинче, çӗр çинче
Хуçа пулса вӑл тӑрать.

Куç умне поэзи пирки Петӗр Хусанкай çырнӑ йӗркесем тухса тӑраççӗ:

Поэзи - шырав, кӗрешӳ, ӑмӑрту,
Ача йӑл кулли, гени тарӗ,

Имçам, юрату, кӳлешӳ, аркату,
Тĕнчемĕр нуши, пархатарĕ, -

тенĕ унта.

Поэзи каçне пынă çынсем, çак сăмахсене вуласа, шухăша кайса тăраççĕ.

Петр Петрович, литература каçне пынă çынсене хăй кĕнекисем çине автограф çырса параканскер, пирĕн еннелле çаврăнчĕ. те:

- Елчĕксем поэзи каçĕ ирттерме пĕлеççĕ. Вĕсен лайăх тĕслĕхĕ çинчен республикăри хаçатсем урлă каласа парсан мĕнле аван пулмалла, - терĕ.

Поэзи каçĕ пуçланчĕ. Эпир сăвă калатпăр. Сăмах Петĕр Хусанкай илет. Культура çуртĕнче тăвăллăн алă çупни кĕрлесе кайрĕ. Поэтăн хамăр тăван литература çинчен паланă çулăмлă, хĕрӳллĕ сăмахне çынсем çав тери пысăк тимлĕхпе итлеççĕ. Петр Петрович сăвăсем вулама пуçларĕ. Ун сăввисем пирĕн чуна çĕклеççĕ. Поэт юлашкинчен хăйĕн «Эпир пулнă, пур, пулатпăр!» сăввине çав тери пысăк çĕкленӳпе вуласа пачĕ:

...Тĕрмере те, вăрçăра та -
Хут çине те чул çине
Çыртăм, халĕ те çыратăп
Халăха ĕненнипе.

Савнă халăх манпалан
Шухăшлатăр та калатăр
Уçă, ирĕк кăмăлтан:
Эпир пулнă, пур, пулатпăр!..

Залра каллех тăвăллăн алă çупни кĕрлесе кайрĕ. Концерт пуçланчĕ. Елчĕк каччисемпе хĕрĕсем чăваш композиторĕсен юррисене юрла-юрла пачĕç, поэтсен сăввисене пăхмасăр каларĕç. Поэзи каçĕ хаваслă ташăпа вĕçленчĕ.

Петр Петрович пире темиçе хутчен те елчĕксемшĕн хăй савăннине каласа пачĕ. Юлашкинчен:

- Елчĕксем тăван литература чысне çӳлте тытаççĕ. Вĕсенчен поэзие юратма вĕренмелле. Поэзи вăл - халăх чунĕ! - терĕ.

Поэзи каçĕ вĕçленсен, Петр Петровича елчĕксем хупăрласа илчĕç. Пурте ăна ырлăх-сывлăх сунаççĕ. Халăх поэтне халăх юратнишĕн эпир савăнса тăратпăр.

1962 çулхи июнĕн 7-мĕшĕ. Эпĕ Кăкшăмра, писательсен çуртĕнче. Кунта халăх поэчĕсем Петĕр Хусанкайпа Яков Ухсай, И. Максимов-Кошкинскипе Мария Ухсай драматургсем, Ваçлей Игнатьевпа Петĕр Чичканов писательсем ĕçлеççĕ. Ирхи апат çинĕ хыççăн пурте пĕр çĕре пухăнтăмăр, чылайччен калаçса лартăмăр. Петĕр Хусанкайпа Яков Ухсай Тăван çĕршывшăн пынă вăрçă кунĕсене аса илчĕç. Аса илмеллисем вара вĕсен питĕ те нумай. Вĕсем иккĕшĕ те иртнĕ вăрçăра паттăр салтаксем пулнă. Çавăн чухне Петр Петрович пире лайăх, ырă хыпар пĕлтерчĕ. Хамăр тăван халăхшăн чунне парса ĕçленĕ Иван Яковлевич Яковлев 1906 çулта Чехословакие сывалма санаторие кайнă пулнă-мĕн. Хусанкай хăй Чехословакире пулнă вăхăтра И. Я. Яковлев сывалса пурăннă çурта шыраса тупнă, Чехословакири писательсен организацийĕпе çак çурт çумне асăну хăми çапма калаçса татăлнă иккен. Ку çĕнĕ хыпар пире пурне те çав тери савăнтарчĕ.

- Иван Яковлевич ĕмĕр-ĕмĕрех мухтава тивĕçлĕ çын, унăн чыслă ячĕ нихçан та ан çухалтăр. Çакна пирĕн яланах асра тытмалла, - терĕ Петр Петрович.

Çав кунхинех кунта поэзи секци бюровĕн ларăвĕ пулчĕ. Ăна Петĕр Хусанкай ертсе пычĕ. Унта Т. Иванов-Таçук çырнă «Калас-калас сăмахăм пур» сăвăсен кĕнекине пăхса тухрăмăр. Таçук сăввисем пирки Г. Орлов, П. Чичканов, эпĕ хамăр шухăш-кăмăла каларăмăр.

- Таçук литературăра нумай çул хушши ĕçлет. Унăн чылай сăввисене вулакансем юратаççĕ. Паллах, поэт çырнă сăвăсене уйрăм кĕнекепе кăларсан аван пулмалла. Сĕнсе пăхар, - терĕ Петр Петрович. Эпир пурте ун шухăшĕпе килĕшрĕмĕр. Каçхи апат çинĕ хыççăн Петр Петрович хăйне пăртак начартарах туйма пуçларĕ. Эпир ун патне кĕтĕмĕр.

- Кăнтăрла пуçа хĕвел тиврĕ пулас. Ыратать, - терĕ пире Петр Петрович.

1964 çулхи июнь уйăхĕнче Шупашкара пăлхар поэчĕ, пирĕн çывăх тусăмăр Ангел Тодоров килчĕ. Вăл Чăваш çĕршывĕпе паллашрĕ, предприятисенче, колхозсенче пулчĕ. Эпир, чăваш çыравçисем, ăна, хамăр хаклă хăнана, Кăкшăма писательсен çуртне илсе кайрăмăр. Ун чухне Петĕр Хусанкай Шупашкарта çукчĕ. Ангел Тодоров Кăкшăм хырлăхĕнче çӳренĕ чух темиçе хутчен те Хусанкая ырăпа асăнчĕ.

- Петĕр Чăвашпа Пăлхар çĕршывĕсем хушшинчи туслăх кĕперне хывакансенчен пĕри, - терĕ вăл.

Ангел Тодорова хăйен тăван çĕршывне ăсатнă кун Хусанкай Мускавран килсе çитрĕ. Вăл çитнĕ-çитменех хамăр тусăмăра, Тодорова, хăй патне хăнана илсе кайрĕ...

Вокзалта Петĕр Хусанкайпа Ангел Тодоров сывпуллашни, пĕр-пĕрне тăванла ыталаса чуптуни, «Педер, Педер, наш родной!» тене сăмахсем ĕмĕрлĕхех ман асăмра юлчĕç.

Ангел Тодоров Пăлхарта Чăваш çĕршывĕпе унăн çыннисем çинчен очерк пичетлесе кăларнă-мĕн. Ун çинчен пире Петр Петрович пĕлтерчĕ.

- Очеркра Ангел Васлей Анатрине те ырăпа.асăннă. Тĕлĕнмелле çын Тодоров. Чăвашсене çав тери хисеплет, çав тери юратать, - терĕ вăл.

Пĕрре çапла, Хусанкай писательсен Союзне пычĕ, хăйĕн тус-юлташĕсене алă парса тухрĕ. Ман пата çитсен:

- Ваçлей, эсĕ пĕлетĕн-и: санăн «Каçар, анне» юрруна Ангел хăйсен «Болгаро-советская дружба» журналĕнче пичетлесе кăларнă, - терĕ.

- Петр Петрович, вăл журнала ăçта курма пулать-ши? - ыйтрăм эпĕ.

- Хусанкайăн пур. Пырса кур, - терĕ те мана Петр Петрович хăйпе пĕрлех хваттерне илсе кайрĕ.

- Санăн та, шăллăм, Пăлхара çитсе курмалла. Çул çӳрени çынна çунат парать, туссене тупма, пĕлме пулăшать, - терĕ Петр Петрович. Вăл кĕнеке çулĕкĕ патне пырса тăчĕ те:

- Акă кунта туссен парнисем, - терĕ. Чăнах та, мĕнле кăна парне çук пулĕ кунта! Ман куç умне пĕтĕм планета çинчи писательсем тухса тăнăн туйăнчĕ.

- Халĕ ятарласах пăлхар чĕлхине вĕренетĕп. Ку кирлĕ, усăллă япала, - тет Петр Петрович. Чăнах та, Петр Петрович пăлхар чĕлхине лайăхах вĕренсе çитрĕ. Çырма та хăнăхса çитнĕччĕ. Çакна эпĕ Пăлхар писателĕ Веселин Иосифов иккĕмĕш хут Шупашкара килсен лайăх туйса илтĕм.

Веселин Иосифов Шупашкар çыннисемпе тĕл пулчĕ. Ун сăмахне вырăсла Петĕр Хусанкай куçарса пычĕ.

Веселин Иосифов килне тухса кайиччен пирĕнпе, чăваш писателĕсемпе, тĕл пулчĕ. Унта эпĕ те Веселин тусăмăра хисеплесе сăмах каларăм.

- Пирĕн Петрович ĕнер хаклă хăнамăр Иосифов сăмахне вырăсла куçарса пачĕ. Паян эпĕ Петр Петровичран хамăн чăвашла калакан сăмахăма пăлхарла куçарса пама ыйтасшăн, - терĕм. Петр Петрович савăнсах килĕшрĕ. Вăл ман сăмаха малтан пуçласа вĕçне çитиччененех Веселин Иосифова пăлхарла куçарса пычĕ.

1967 çулхи декабрĕн 26-мĕшĕнче эпĕ аллă çул тултартăм. Çавна май Чăваш государство филармони çуртне мана чыслама тус-тăвансем, пĕлĕшсем, юлташсем пухăнчĕç. Ун чухне Петĕр Хусанкай та мана хисеплесе сăмах каларĕ, çулăм чĕреллĕ поэтăмăр Çĕçпĕл Мишши бюстне, хăйĕн çĕнĕ «Хушка хумсем» ятлă кĕнекине парнелерĕ. Кĕнеке хуплашки çине çапла çырнă:

«В. И. Давыдов-Анатрие
Ырлăха та телее,
Асăнма-и, тен, кайран -
Аллăри Анатрие
Утмăлти Хусанкайран...»

Эпĕ аслă поэтăмăр парнисене, çав тери хаклă япаласем. вырăнне хурса, упраса усратăп. Петр Петрович çинчен аса илсе калас тенĕ сăмахăм çав тери нумай. Ун ырă сăнарĕ яланах куçăм умĕнче.

1969 çулхи çуркунне эпир, чăваш писателĕсемпе композиторĕсем, культура работникĕсем, Ульяновска, Ленин çуралнă хулана, хамăр литературăпа искусство эрнине ирттерме кайрăмăр. Пире, чăвашсене, Ульяновск ĕçченĕсем хапăл туса, ăшă кăмăлпа кĕтсе илнине каласа пама сăмахăм та çитес çук. Пире «Волга» ятлă хăна çуртне вырнаçтарчĕç. Эпĕ Хусанкайпа пĕр пӳлĕме лекрĕм. Кунта пĕр эрне пурăнтăмăр. Хамăр пуласлăх çинчен, хамăр тăван литературăпа тăван чĕлхемĕр çинчен, çывăх тус-юлташăмăрсем çинчен нумай калаçрăмăр.

- Поэт сăмахĕ - витĕмлĕ сăмах. Эпир хамăр пурăннă чухне мĕн калас тенине йăлтах каласа хăвармалла, - терĕ пĕрре мана Петр Петрович.

Пĕр калаçура вăл чăваш халăх пуласлăхĕ çинчен хамăра ĕçкĕрен, леш усал «аншарлинчен» тасалма кирли çинчен хытă каларĕ.

- «Аншарлинчен» хӑтӑлаймасан, эпир ҫав тери пысӑк инкек патне пырса тухма пултаратпӑр, хамӑрӑн пулас ӑрӑва хӗн кӑтартатпӑр, - терӗ вӑл.

Эпир Ульяновск хулипе облаҫӗнчи предприятисенче, колхозсенче, шкулсенче пултӑмӑр, халӑха хамӑр литературӑпа, искусствӑпа паллаштартӑмӑр. Петр Петрович, хӑйӗн сывлӑхӗ начарланса пынине пӑхмасӑр, тӗлпулусенче хӗрӳллӗ сӑмахсем туха-туха каларӗ, хӑйӗн сӑввисене пысӑк ҫӗкленӳпе вуларӗ. Кунта вӑл ятарласа вырӑсла «Гимн сердца» ятлӑ сӑвӑ ҫырчӗ:

Симбирск! Священный город мира!
Ты виден всем издалека...
Настроилась на песню лира,
Звенит сердечная строка...

Ҫак сӑввине поэт телевиденипе, хамарӑн юлашки концерта курма пынӑ ҫынсем умӗнче театрта вуларӗ. Ӑна пурте хапӑл туса, ӑшшӑн йышӑнчӗҫ.

1969 ҫулта пирӗн пата Шупашкара Воронеж писателӗсем килчӗҫ.

Хӑнасене ӑсатнӑ кун Чапаевски поселок клубӗнче туслӑх концерчӗ, литература каҫӗ пулчӗ. Унта Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗн председателӗ С. М. Ислюков юлташ Воронежри писательсен организацине республикӑн Хисеп грамотине пачӗ. Петӗр Хусанкай, Александр Кӑлкан, Надежда Черепанова тата эпӗ пӗрин хыҫҫӑн тепри тухса хамӑр сӑвӑсене вуласа патӑмӑр. Литература каҫӗ хыҫҫӑн хӑнасемпе кӗрекере лартӑмӑр. Тӳрех калатӑп: кӗреке илемне кӳрекенсенчен пӗри Петр Петрович пулчӗ. Вӑл унта сӑмах тухса каларӗ. Нихҫан та манмастӑп: Петр Петрович, хӑйӗн сӑмахне каласа пӗтерсен, чылай вӑхӑт хушши пирӗн ҫине пӑхса тӑчӗ, куҫӗнчен куҫҫуль

тумламĕсем юхса анчĕç. Эпир, нимĕн пулман пек, ура çине тăтăмăр та алăри черккесене çӳлелле йăтса: «Петр Петрович сывлăхĕшĕн!» — терĕмĕр. Хусанкай пăртак кулса илчĕ.

1969 çулхи ноябрь уйăхĕнче Çеçпĕл Мишши çуралнăранпа 70 çул тултарнине паллă турăмăр. Çав ятпа хамăр филармони çуртĕнче чаплă лару пулсă иртрĕ. Пысăк концерт пулчĕ. Концертра Петĕр Хусанкай, Стихван Шавлы тата эпĕ Çеçпĕле халалласа çырнă сăвăсене вуласа патăмăр. Ку вăл пирĕн Петр Петровичпа пĕрле юлашки хут сăвă вулани пулчĕ.

Петĕр Хусанкай чирĕ йывăрлансах пычĕ. Ăна вăрах вăхăтлăха больницăна хучĕç. Эпир, писательсем, пурте тенĕ пекех, ун патне çӳреттĕмĕр. Эпĕ ун чухне хам курнине, унпа мĕн калаçнине çырса пытăм. Эпĕ вĕсене çак асаилĕве кĕртсе хăварма кирлĕ пулĕ тетĕп.

1969 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕ. Паян Совет Конституци кунĕ. Шупашкар урамĕсенче халăх хĕвĕшет. Çанталăк лайăх, сывлăш уçă.

Эпĕ республикăри тĕп больницăна кайрăм. Унта пирĕн юратнă поэтăмăр, халăх сăвăçи Петр Петрович Хусанкай выртать.

Сестрасем мана: «Нумай ларас марччĕ, Хусанкай час ывăнать», - терĕç. Тĕрĕс асăрхаттараççĕ вĕсем. Мана халатсăрах кĕме ирĕк пачĕç. Вăрăм коридорпа пыратăп. Пăхатăп та, Петр Петрович ман еннелле утса килет. Хăй мана курсанах аллине тăсрĕ, сывлăх сунчĕ: «Пӳлĕме кĕрсе ларар», - терĕ. Ман чун ыратма пуçларĕ. Петр Петрович хуралса, начарланса кайнă. Вăл пӳлĕме кĕрсенех чӳрече çумне пырса тăчĕ, кĕсел ĕçме пуçларĕ.

- Эпĕ сан валли ятарласа тăпăрч илсе килтĕм. Çисе пăхмăн-ши, Петр Петрович? - терĕм. Хусанкай ман еннелле çаврăнчĕ те:

- Çимелли пурте пур, анчах нимĕн те анмасть, - терĕ.

Çак сăмахсене илтме мана çав тери йывăр пулчĕ. Эпĕ ăна Воронежра чăваш литературин эрни пулнă кунсенче тухнă «Коммуна»

хаҫатăн пĕр номерне патăм. Унта Воронежра пулнă чăваш писателĕсен произведенийĕсемпе пĕрле Петр Петровичăн пĕр пысăк сăвви пичетленнĕ. Ку хаҫатшăн Хусанкай мана тав турĕ. Эпĕ Петр Петровича йывăррине питех те лайăх ăнланатăп. Ҫавăнпа хам та васкаса калаҫмастăп. Петр Петрович выртрĕ те:

- Мĕнле ҫĕнĕ хыпарсем пур? - тесе ыйтрĕ.

Эпĕ ăна литература хыпарĕсене кала-кала патăм. Хам Аркадий Эсхель, Николай Евстафьев поэтсемпе пĕрле Муркаш районĕнчи «Передовик» совхозран халь ҫеҫ таврăнни ҫинчен пĕлтертĕм.

- Аван япала, яланах халăхпа пĕрле пулмалла, - терĕ Петр Петрович. Вăл хăй больницăра выртнишĕн, ҫĕнĕ япаласем ҫырайманнишĕн кулянма пуҫларĕ. Эпĕ ăна лăплантарма шут тытрăм пулас: «Эсир халăхшăн, хамăр тăван литературăшăн тунă ырă ĕҫсем ҫав тери пысăк. Питех кулянма кирлĕ мар», - терĕм.

- Ҫырмалли нумай, тăванăм, ҫырмалли нумай, - тет Петр Петрович. Ҫеҫпĕл Мишши ҫинчен сăмах пуҫланчĕ.

- Петр Петрович, эсĕ Ҫеҫпĕл ятне, унăн произведенийĕсене тĕнче тăрăх сарас тĕлĕшпе ырми-канми ĕҫлерĕн. Ҫăвăнпа та Ҫеҫпĕл ячĕпе хисепленекен премие сана панишĕн эпир пурте чун-чĕререн савăнатпăр, - терĕм ăна.

- Ҫеҫпĕле манма юрамасть. Эсĕ те поэт амăшĕ, Укахви аппа, ывăлĕ ҫинчен мĕн каланине йăлтах ҫырса илме тăрăш, - терĕ Петр Петрович. Унтан вăл Ҫеҫпĕлĕн «Ҫĕн кун аки» сăввине аллă чĕлхепе кăларас тесе хăй мĕнле тăрăшни ҫинчен каласă пачĕ.

- Ҫăмăлах пулмарĕ. Куҫаракансем патне те хамăнах кĕнеке ярса памалла пулчĕ, - терĕ Хусанкай. Эпĕ ăна хамăрăн юратнă поэтăмăр, тусăмăр Митта Ваҫлейĕ ҫинчен аса илсе ҫырнисене пĕр ҫĕре пухса кĕнеке туса кăларма хатĕрленни ҫинчен пĕлтертĕм: «Ҫак ĕҫе тума

çамрăк поэта Геннадий  Юмарта хушнă», - терĕм. Уншăн Петр Петрович савăнчĕ.

- Аван çын, аван поэтчĕ Митта, анчах нумай пурăнаймарĕ, пурнăçĕ асапла пулчĕ, - терĕ Петр Петрович.

- Митта сана, эсĕ çырнă япаласене пĕтĕм кăмăлтан юрататчĕ. Сана хамăр поэзи утравĕ вырăнне хуратчĕ, - тетĕп. Хусанкай нимĕн те чĕнмерĕ. Пăртак тăхтаса тăрсан çеç: «Мĕншĕн питех кулянас: ман тантăшсем, Митта тусăм та тахçанах кайрĕç. Эпĕ халĕ те пурăнатăп-ха...» - тесе хучĕ. «Петр Петрович, вилесси çинчен ан шухăшла», - тетĕп эпĕ ăна.

«Тĕрĕс. Çĕнĕ çула чĕрĕлсе тухасчĕ. Манăн хамăн кил пур», - терĕ вăл.

Эпĕ Хусанкая хамăр чăвашсен паллă драматургĕ, тухтăрĕ Петр Николаевич Осипов юбилейне, 70 çул тултарнине, паллă тума хатерленни çинчен каласа патăм.

- Петр Николаевич пĕтĕм пурнăçне, вăй-халне хамăр тăван халăхшăн пачĕ. Вăл мухтава тивĕçлĕ, - терĕ мана Петр Петрович.

Эпĕ Петĕр Хусанкай патĕнче нумай ларнине мансах кайнă.

«Эсĕ мана нихçан та тухса кай тесе калас çук», - тетĕп эпĕ. Петр Петрович нимĕн те чĕнмест. Туятăп: вăл ывăннă. Эпĕ ăна ырлăх-сывлăх сунса ыталарăм та: «Тепре куриччен», - тесе, палатка алăкне уçрăм, больница коридорне тухрăм. Чуна йывăр.

1970 çулхи январĕн 22-мĕшĕ. Паян халăх поэчĕ Петр Петрович Хусанкай çуралнă кун. Эпĕ писательсен Союзĕнче. Мана кунта Илпек Микулайĕ: «Атя, Ваçлей, Петр Петрович патне, больницăна каятпăр», - терĕ. Эпĕ хаваслансах килĕшрĕм. Иксĕмĕр те Петр Петрович валли кучченеç - панулми илтĕмĕр.

Больницăна Хусанкай патне тусĕсем, юлташĕсем пиртен малтанах килсе ларнă-мĕн. Кунта Илпек Микулайĕ, Николай Дедушкин, Александр

Алга, Алексей Талвир, Иван Кузнецов, Стихван Шавлы писательсем, Григорий Хирбю композитор, наука ҫынни Петр Денисов, Петр Петрович мăшăрĕ Вера Кузьмина, ачисем - Салампипе Атнер. Эпир пурте Петр Петровича ҫуралнă кун ячĕпе саламлятпăр, хăвăртрах чĕрĕлсе тухма ырлăх-сывлăх сунатпăр. Вера Кузьминична пире эрех сĕнчĕ, ĕҫрĕмĕр. Петр Петрович та сыпса пăхрĕ. Хĕрӳ калаҫу пуҫланчĕ. Илпек Микулайĕ Хусанкай патне пырса ларчĕ те аллисене тытса ăшăтма пуҫларĕ.

Петр Петрович автограф пирки сăмах тапратрĕ. «Манăн тусăмсем парнеленĕ кĕнекесем ҫав тери нумай: шкафа та вырнаҫмаҫҫĕ. Хам та ҫырса кĕнеке нумай парнеленĕ. Автограф вăл хăйне майлă ҫырнă произведени пек япала. Кашни ҫынна шухăшласа, мĕн те пулсан ҫĕнни ҫырса паратăн-ҫке-ха», - терĕ.

Эпир, больнйцăна килнисем, тетрадь ҫине кашниех Хусанкая ырă сунса хамăр шухăш-кăмăла ҫырса хăвартăмăр. Вăхăт нумая кайрĕ. Петр Петрович ывăнса ҫите пуҫланине ăнланса илтĕмĕр, поэтпа алă парса сывпуллашрăмăр. Эпĕ алă панă чух Петр Петровича: «Хăвăртрах сывал, Сиктĕрмене каятпăр», - терĕм. Петр Петрович хытă сасăпах: «Хăҫан каятпăр?» - тесе ыйтрĕ. «Больницăран тухсанах», - терĕм эпĕ. Петр Петрович пăртак кулса илчĕ.

1970 ҫулхи февралĕн 18-мĕшĕ. Паян, кăнтăрла тĕлĕнче, Аркадий Александрович Эсхель, Николай Филиппович Илпек юлташăмсемпе больницăна, Петр Петрович Хусанкай патне кайрăмăр.

Петр Петрович хăй выртакан пӳлĕмре пĕчченех. Вăл эпир пынишĕн савăнчĕ, пире хапăл тусах кĕтсе илчĕ. Хăй вырăнĕ ҫине ларнă, панулми шуратса ҫиет.

Петр Петрович сăнран питех те начарланнă. Вăл утиялне сирчĕ те урисене кăтартрĕ. Вăрҫăра аманнă ури шыҫа пуҫланă.

- Хĕрĕх виçĕ килограмм çеç тăрса юлтăм. Вăй та çук, - тет Петр Петрович. Анчах хăй çаплах чипер, илемлĕ калаçать, хушăран кулкаласа та илет.

Чĕре çунать. Эпĕ Хусанкай çине, ун чĕрĕ сăнарне хам асăмра ĕмĕрлĕхе хăварас тесе, куç илми пăхатăп. Петр Петрович çакна сисрĕ пулас.

- Ваçлей, эсĕ ман çине мĕншĕн çав тери тилмĕрсе пăхса ларатăн? - тесе ыйтрĕ. Эпе пĕр сăмах та чĕнмерĕм, куççуль пĕрчисене шăлса илтĕм. Эсхельпе Илпек больницăра выртакан хамăр тус-юлташăмăр Семен Матвеевич Ислюков патне, тепĕр пӳлĕме, тухса кайрĕç. Эпир Петр Петровичпа иккĕн.

-Мĕнле пурăнатăн, шăллăм, мĕн çыратăн? - тесе ыйтрĕ манран Петр Петрович. Эпĕ ăна: «Йошкар-Оларан, Миклай Казаков поэтран çыру илтĕм, вăл сана пысăк салам калама ыйтнă, санăн тусу Александр Иванович Ток вилни çинчен çырнă», - терĕм. Александр Ток вилнине пĕлсен, Петр Петрович питех те кулянчĕ. «Лайăх çынччĕ, лайăх юлташчĕ», - терĕ.

Калаçу РСФСРти писательсен черетлĕ Ш-мĕш съезчĕ çинчен пуçланчĕ. «Съезда каяссиех пулмасть пулĕ, вăй илсен, чĕрĕлсен, хамăр республика юбилейĕнче пуласчĕ, - тет Хусанкай. Вăл калаçса ларнă хушăрах хулне çĕклесе кăтартрĕ. - Тытса кур-ха, кунта нимĕн те юлман вĕт», - терĕ.

Пӳлĕме Семен Матвеевич Ислюков, Аркадий Эсхель, Николай Илпек, Микихвер Ваçанкка ывăлĕ - Синькор кĕчĕç. Семен Матвеевич Петр Петрович минтерне тӳрлетсе хучĕ.

Эпир Петр Петрович патĕнче икĕ сехет ытла лартăмăр. Вăхăт питех те хăвăрт иртсе кайрĕ.

«Ан каскăр-ха, ларăр», —тет Петр Петрович. Анчах та пирĕн каймалла, виçĕ сехетре Союз правленийĕн ларăвĕ пуçланмалла.

Семен Матвеевич Ислюков пире Петр Петрович патне час-час килсе курма ыйтрĕ: «Тус-юлташĕсем килни ун хуйхи-суйхине пусарать», - тет вăл.

1970 çулхи февралĕн 26-мешĕнче каçхине больницăна, Петр Петрович Хусанкай патне кайрăм. Халăх нумай, чирлĕ выртакансем патне тăванĕсем, тус-пĕлĕшĕсем килнĕ. Эпĕ Петр Петрович патне кĕме пулмасть пулĕ, тесе шутласа тăратăп. Пăхатăп та: Петр Петрович мăшăрĕ Вера Кузьминична мана хирĕç туха парать.

- Кĕрĕр, кĕрĕр, - терĕ те вăл мана хăех Петр Петрович патне ăсатса ячĕ. Петр Петрович мана лайăх кĕтсе илчĕ. Калаçу вăрăма, пĕр пилĕк сехете яхăн пычĕ. Эпĕ тухса каяс умĕн вăхăт 12 сехетрен те иртсе кайнă. Эпĕ Хусанкая ыран, февралĕн 27-мĕшĕнче, хамăр союзра поэзи секцийĕн ларăвĕ пуласси тата республика чăвашсен паллă ученăйĕ, чĕлхе ăсти Василий Георгиевич Егоров профессор 90 çул тултарнине паллă тума хатĕрленни çинчен пĕлтертĕм.

Петр Петрович çавăнтах поэзи секцийĕн ĕçне хутшăнакан тус-юлташсене хăйĕнчен салам калама ыйтрĕ.

- Секцие лайăх, йĕркеллĕ ирттерĕр. Кирлĕ-кирлĕ мар япаласемшĕн чĕрре ан кĕрĕр. Лайăххине - лайăх, начаррине - начар тейĕр. Литература лаççинчи çитменлĕхсене пытарса хăварма кирлĕ мар, шăллăм. - Унтан пăртак тăхтаса тăнă хыççăн: – Василий Георгиевича халалласа сăвă çыртăн пулĕ-ха? - тесе ыйтрĕ.

- Çыртăм, Петр Петрович, çыртăм. Çынни питĕ кăмăллă, ырă ĕçсем нумай турĕ. Вăл мана институтра та вĕрентнĕ, - терĕм эпĕ.

- Манран та ăна пысăк салам калăр. Эпĕ хам ун çинчен çырнине Верăна парса ятăм, - терĕ Петр Петрович. Эпĕ çаплах литература хыпарĕсене кала-кала паратăп. Вера театра кайрĕ. Паян унта «Вĕлле хурчĕ - ылтăн хурт» спектаклĕн премьери пулать.

Хусанкай каçхи апат çиме шутларĕ. Эпĕ ăна тăрса ларма пулăшрăм, сĕтел çине ĕçме-çиме пырса хутăм. Петр Петрович питĕ ăслă калаçать, анчах та сасси çав тери начарланса çитнĕ. Ку çеç те мар, çиме пуçланă апата çăтса яраймасăр тертленет. Вăхăт-вăхăтăн йăлт кăвакарса каять, ыратнипе куçне хупса илет. Эпĕ ним чĕнмесĕр пăхса ларатăп, анчах ăна нимĕнпе те пулăшма пултараймастăп. Хусанкай мана тăваралă çу çиме сĕнет.

- Çи, нимĕн те ан хăвар. Ахалех юлать, - тет вăл мана. Çапла иксĕмĕр пĕр тирĕкренех тăваралă çу çирĕмĕр. Петр Петрович малтан пĕр черкке симĕсрех тĕслĕ симпыл ĕçрĕ.

– Кăна ятарласа ман валли туса килчĕç-ха. Питĕ аван, сиплĕ япала. Ăна Петр Николаевич Осипов та тутанса пăхрĕ. Вăл та ырларĕ, - терĕ. Пĕрремĕш черккине ĕçсенех, Петр Петрович куçне хупса нумайччен пĕр чĕнмесĕр ларчĕ. Унтан ман çинелле пăхрĕ те: -Куç умне иртнĕ кунçулăм тухса тăчĕ. Пахчасенче пыл хурчĕсем сĕрленĕн туйăнса кайрĕ. Çапла, Хусанта вĕреннĕ чух, яла килме тухсан, çула май аппа патне кĕтĕм. Вăл мана пĕр алтăр çак халь ĕçекен симпыл пек шерпет тыттарчĕ. Эпĕ ăна ĕçрĕм те йăлт уçăлса кайрăм, ура ыратни те, ывăнни те йăлтах иртрĕ, - терĕ. Унтан вăл мана пăлхарсен шурă эрехне пĕр черкке тыттарчĕ. Эпĕ эрехе тутанса пăхрăм.

Сăмах хăйне больницăра мĕнле сыватни çинчен пуçланчĕ.

- Аван. Пурте пур. Тусăмсем мĕн кăна илсе килмеççĕ пулĕ. Анчах анмасть. Вăй çук, - тет Хусанкай. Ана усал чир çав тери, пĕр хĕрхенӳсĕр кăшлать. Апат çисе пĕтернĕ хыççăн эпĕ тирĕк-кашăксене çуса лартрăм.

- Аван, паян эсĕ ман пата килни сестрана, Гальăна, çăмăллăх пачĕ, - терĕ Петр Петрович.

Сăмахран сăмах, калаçу хамăр литература çинчен пуçланчĕ. Эпĕ Митта Ваçлейĕ: «Пирĕн пилĕк улăп - Яковлев, Иванов, Ашмарин,

Çеçпĕл, Хусанкай пур», - тенине аса илтертĕм. Миттан Петр Петровича асăнса çырнă сăввине каласа патăм:

Сана асăнсан, ялан пĕр сăмах:
«Чăваш тухйинчи чи пысăк ахах».
Анчах эп каласшăн: «Петĕр Питравĕ
Ахах кăна мар - пуянлăх утравĕ».

Çак. йĕркесене илтсен, Хусанкай, хăйĕн вăйĕ çук пулин те, илемлĕн кулса илчĕ.

- Ăна нумаях пулмасть мана Василий Архипович Долгов та аса илтерсеччĕ-ха. Ăна вара хам парнеленĕ кĕнекем çине çакăн пек тăватă йĕрке çырса патăм:

Улăп терĕн эс мана.
Улăп вăл - пĕрре.
Епле эп сан сăмахна
Кăларам тӳрре, -

терĕ Петр Петрович.

Калаçура хамăр тусăмăра, Мускав чăвашне Турат Ваççине, ырăпа аса илтĕмĕр.

Петр Петрович хур тĕкĕ илчĕ те шăлĕ хушшисене тасатма пуçларĕ. Эпĕ унăн шап-шур шăлĕсенчен тĕлĕннипе чăтаймарăм: «Сан шăлусем хăвăнах-и?» - тесе ыйтрăм. Петр Петрович хăшĕ хăйĕн, хăшĕ хăйĕн маррине хур тĕкĕпе тĕрте-тĕрте кăтартрĕ. «Çаксем, малтисем, Пăлхар тухтăрĕ Баян Баянов лартнисем», - терĕ. Петр Петрович манран хамăр тусăмăр Уйăп Мишши сывлăхĕ çинчен ыйтса пĕлчĕ. Унтан вăл мана Мускавра Иван Данилович Кузнецов профессора операци туни çинчен пĕлтерчĕ.

- Эпир ун патне кунтан Семен Матвеевичпа ырлăх-сывлăх сунса телеграмма ятăмăр, - терĕ. Калаçнă хушăра Петр Петрович час-часах тарăннăн сывла-сывла илет. Сисетĕп: вăл хуйхăрать, вăл тертленет, вăл шухăшпа çунать. Эпĕ ăна час-часах: «Чĕрĕлетĕн, ура çине тăратăн, санăн хамăр республика 50 çул тултарнă ятпа ирттерекен уяв кĕрекинче лармалла», - тетĕп. Вăл мана: «Маларах тухасчĕ, Ленин юбилейĕнче пуласчĕ-ха», - тесе хучĕ.

Вăхăт нумая кайрĕ. Эпĕ юратнă поэтăмăра ырă каç сунтăм та тухса кайма тăтăм. Петр Петрович мана хăйпе çапла пĕр каç ларнишĕн темиçе хутчен те тав турĕ. Ку пирĕн юлашки тĕлпулу пулчĕ. Çур çĕр те иртнĕ иккен. Больница алăкĕсене пурне те питĕрсе хунă. Мана пĕр хĕрарăм - сестра пулас, курчĕ те:

- Эпир сире кунтах çĕр каçать пулĕ тесе шутланăччĕ, - терĕ, хыçалти алăкран кăларса ячĕ.

1970 çулхи мартăн 4-мĕшĕ. Юратнă поэтăмăрăн, тĕлĕнмелле ырă кăмăллă çыннăмăрăн - Петр Петрович Хусанкайăн - çулăмлă чĕри тапма чарăнчĕ. Калама çук пысăк çухату.

Чун ыратать, чĕре çунать.

...Мартăн 6-мĕшĕнче, ирхине 10 сехетре, Петр Петрович тупăкне парти обкомĕн Политикăллă вĕренӳ çуртне лартрĕç. Чăваш çĕршывĕ юратнă поэтăмăрпа сывпуллашать. Çын хыççăн çын кĕрет поэтпа сывпуллашма. Вĕçĕ-хĕрри те çук. Пурте поэтăн ырă сăнарне ĕмĕрлĕхе асра хăварасшăн.

Поэт тупăкĕ умĕнче хисеплĕ хуралта республикăри партипе совет органĕсен руководителĕсем, искусствăпа литература ĕçченĕсем, рабочисемпе колхозниксем, служащисем, Шупашкарти шкулсенче вĕренекенсемпе студентсем... Эпĕ хисеплĕ хуралта Мускавран Петр Петровича пытарма килнĕ Турат Ваççи тусăмпа, Николай Евстафьев

поэтпа тăтăм. Хурлăхлă музыка кĕвви илтĕнет. Чăтса тăма çав тери йывăр. Куçран куççуль юха-юха анать.

Кăнтăрла иртсен 2 сехетре Хусанкай тупăкне урама илсе тухрĕç. Кунта та халăх туллиех. Эпир, Леонид Родионов драматургпа, Демьян Семенов журналистпа пĕрле, малта тупăк виттине йăтса пытăмăр.

Урамсенче машинăсем те чарăнчĕç. Пĕтĕм республика Хусанкая ăсатать.

Масар çинче хурлăхлă митинг вĕçленет. Поэт тăванĕсемпе пĕлĕшĕсем, тусĕсемпе юлташĕсем Петр Петровичпа сывпуллашаççĕ, масар çийĕн хурлăхлă кĕвĕ илтĕнет. Тепĕр самантран поэт тăпри чечек кăшăлĕсемпе хупланса юлать.

Петр Петрович Хусанкай емĕрлĕхех пиртен уйрăлса кайрĕ. Анчах та унăн тăван халăхшăн тунă пархатарлă ĕçĕ вилĕмсĕр. Унăн çутă сăнарĕ пирĕн куç умĕнче. Поэт яланах пирĕнпе пĕрле хастар салтак пек малалла утать.

*1970*